Василий Давыдов-Анатри

**Чăваш çĕршывĕ**

Кĕвви *Т. Фандеевăн*

Чăваш çĕршывĕ, эс çуллен
Çунат саран, вăй-хал илен,
Пур ĕçлĕ халăх çемйинче,
Асамлă Атăл хĕрринче
Çĕн самана çуртне çĕклен,
Пире сӳнми телей пиллен.

Чăваш çĕршывĕ, тăрăшан,
Ята, чыса çӳлте тытан.
Сан çăлтăру халь тӳпере,-
Упран тăван чĕлхемĕре.

Ялсем ӳсеççĕ, хуласем...
Янраççĕ пирĕн юрăсем!
Чăваш çĕршывĕ, сас паран
Инçе, çут çăлтăрсем таран.

Эпир сана юратнăран,
Пур халăхпа тус-тăванран
Эс паттăр, улăпла утан.
Тавах сана чунтан-вартан!

*1980-1990*

*Давыдов-Анатри, В. Чăваш çĕршывĕ / В. Давыдов-Анатри ;* кĕвви *Т. Фандеевăн // Юррăмсем-çунатăмсем : сăвăсем / В. Давыдов-Анатри. – Шупашкар, 1997. – С. 12.*